Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерӳ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчепе тухать

81 (7506) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи октябрĕн (юпа) 3-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

Октябрĕн 5-мĕшĕнче – Учительсен кунĕ

**ХИСЕПЛĔ УЧИТЕЛЬСЕМ, ВĔРЕНТӲ УЧРЕЖДЕНИЙĔСЕН ĔÇЧЕНĔСЕМ, ВОСПИТАТЕЛЬСЕМ, ПЕДАГОГИКА ĔÇĔН ВЕТЕРАНĔСЕМ!**

**Сире пурне те çывхарса килекен професси уявĕ – Учительсен кунĕ ячĕпе чун-чĕререн саламлатăп.**

Учитель ĕçĕ мĕн ĕмĕртенпех сумлă та пархатарлă пулнă. Эсир ачасене ăс-тăн панипе пĕрлех вĕсем чăн - чăн çын пулса ӳсчĕр тесе тимлетĕр, йывăрлăхсене çĕнтерме, пурнăçра хăйсен вырăнне тупма хăнăхтаратăр.

Паян пурнăç кунран-кунах улшăнать, çĕнелет. Çакă сирĕн яваплăха та ӳстерме ыйтать. Ачасене тĕрлĕ предметсемпе тарăн пĕлӳ панипе пĕрлех çĕнĕ технологие алла илме вĕрентмелле. Çакна валли паян шкулсенче условисем çителĕклĕ. "Вĕрентӳ" наци проекчĕ пурнăçа кĕме пуçланăранпа вĕрентӳ учрежденийĕсем компьютерсемпе татах пуянланчĕç, шкулсен пурлăхпа техника бази çирĕпленчĕ. Учитель ĕçĕ ахаль те пултарулăхпа тачă çыхăннă. Вĕрентӳ ĕçне пырса кĕрекен çĕнĕлĕхсем вара сире татах та ӳсĕмлĕрех, тăрăшарах вăй хума хавхалантараççĕ.

Хисеплĕ вĕрентекенсем! Çĕршыв пуласлăхĕ сирĕн тăрăшулăхăрпа пуçарулăхăртан, ачасене мĕнле вĕрентсе воспитани панинчен нумай килет. Эсир çакна чунчĕререн ăнланса вăй хуни савăнтарать. Хăвăрăн ĕçе, ачасене юрататăр, вĕсен пуласлăхĕшĕн çунса тăратăр. Çак пархатарлă енсем сирĕнте нихăçан та ан иксĕлччĕр.

Сире хăвăрăн тивĕçĕре тӳрĕ чунпа пурнăçлама ырлăх-сывлăх, ăнăçу, творчествăлла хавхалану, телей сунатăп. Малашне эсир татах та пуçаруллăрах пуласса эпĕ шансах тăратăп. Çăмăл мар ĕçĕрте вăй-хал та, чăтăмлăх та, чун ăшши те çиттĕрччĕ сирĕн.

**Район пуçлăхĕ Ю. А. ИВАНОВ.**

## Пĕлӳ тĕнчине çул хывакан



*Людмила Сергеевна Тихонова Муркаш шкулĕнче вăй хурать. Вăл – пуçламăш классен учительници. 24 çул çак ĕçре. И.Я. Яковлев ячĕпе хисепленекен Чăваш патшалăх педагогика институчĕн пуçламăш классен факультетне вĕренсе пĕтернĕскер, шкула килекен ачасене пĕрремĕш кунран пуçласах пĕлĕвĕн аслă тĕнчине çул тупма пулăшас тесе хăйĕнчен мĕн килнине пĕтĕмпех тума тăрăшать.*

*Сăн ӳкерчĕкре: Л.С. Тихонова урок вăхăтĕнче.*

*В. ШАПОШНИКОВ сăн ӳкерчĕкĕ.*

Учительсен кунĕ ячĕпе

# Мĕн пурнăçлани чикĕ ан пултăр

***Приоритетлă наци проекчĕсем пирĕн пурнăçра туллин пурнăçланса пыраççĕ, çавна май курăмлă ĕçсем те самай палăраççĕ. Çакă вĕрентӳ ĕçĕнче те аванах курăнать. Вĕрентекенсен уявĕ çитнĕ май эпĕ "Вĕрентӳ" наци проектĕнчи ырă утăмсемпе паллаштарма район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн тĕп специалистĕнчен Зоя Юрьевна ДИПЛОМАТОВАРАН ыйтрăм.***

– Чăнах та хамăр пурнăçра "Вĕрентӳ" наци проекчĕн ырă витĕмне аванах туйма пуçларăмăр. Çакă вара вĕрентӳ ĕçне ытларах хĕмлентерме çул уçрĕ. Кунта чи малтан инноваци программисемпе анлă усă куракан вĕрентӳ учрежденийĕсене хавхалантарнине, чи лайăх вĕрентекенсене, çавăн пекех класс ертӳçисене хушма пулăшу уйăрнине, вĕрентӳ ĕçне информатизациленине, пурлăх базине пуянлатнине, шкулсене вĕрентӳ пособийĕсемпе, автобуссемпе тивĕçтернине палăртмалла. Çаксене йăлтах вĕрентӳ ĕçĕн пахалăхне ӳстерме, анлă тавракурăмлă çамрăк ăру çĕршывăн çирĕп тĕрекĕ пултăр тесе йĕркеленĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ пирĕн Президент "Пире пĕлӳ пани çеç мар, пурте паха пĕлӳ илме пултарни кирлĕ", – тет.

Сăмах май çакна та палăртар. Н.В. Федоров Президент программипе килĕшӳллĕн пирĕн района шкул ачисем валли пысăк парне килсе çитрĕ. Библиотека çӳлĕкĕсем илемлĕ литературăпа тата тĕрлĕрен справочниксемпе пуянланчĕç. Пĕтĕмпе вара 1346 экземплярĕ 93308 тенкĕлĕх пулчĕ.

Унсăр пуçне ЧР Вĕрентӳ министерствинчен 464 кĕнеке 57 пин те 694 тенкĕлĕх килсе çитрĕ. Вăл шутра вăтăр томран тăракан "Большая Российская энциклопедия" кĕнекесен пуххин 7 томĕ те пур. Апла пулсан ачасен ытларах та ытларах кĕнеке вуламалла, пĕлӳ тĕнчине ăнтăлмалла. Кĕнеке пĕлӳ çăлкуçĕ пулнине манмалла мар.

Вĕрентĕве модернизацилессин комплекслă проекчĕпе килĕшӳллĕн районти пуçламăш классене вĕрентмелли шкулсенче вĕренекенсем валли 559300 тенкĕлĕх сĕтел-пукан кӳрсе килнĕ.

**– Сисетпĕр ĕнтĕ, инноваци программисемпе анлă усă куракан вĕрентекенсене, вĕрентӳ учрежденийĕсене хавхалантарасси ырă йăлана кĕчĕ.**

– Чи малтан район шайĕнчи пусăма асăнар. Чи пултаруллисене хавхалантарма район администрацийĕн пуçлăхĕн грантне пама пăхнă. Çирĕм вĕрентекене пилĕкшер пин тенкĕ, пилĕк вĕрентӳ учрежденине çирĕмшер пин тенкĕ укçан хавхалантарма пăхнă.

Конкурс комиссийĕ пăхса тухнă хыççăн Москакассипе Нискасси шкулĕсем Раççей Федерацийĕн Президенчĕн грантне 1 миллион тенкĕне тивĕçнине палăртрĕç. Муркаш шкулĕ вара Чăваш Республика Президенчĕн премине 200 пин тенкĕне тивĕçрĕ. Çак укçапа вĕрентӳпе пурлăх базине пуянлатнă тата вĕрентӳ ĕçченĕсен пĕлӳ шайне ӳстернĕ çĕрте усă курĕç.

**– Анлă тавракурăмлă çамрăксене хавхалантарасси тата епле пырать?**

– Ку енĕпе те район администрацийĕн пуçлăхĕн парнине уйăрма палăртнă. Çулсеренех вĕренӳре аван ĕлкĕрсе пыракансене ятарлă стипендипе тивĕçтереççĕ. 2007 çулхи январь уйăхĕнчен пуçласа вара стипенди калăпăшĕ 200 тенкĕпе танлашать. Районăн обществолла пурнăçне активлă хутшăнакансене Хисеп грамотисемпе, Тав çырăвĕсемпе хавхалантараççĕ.

**– Класс ертӳçисем валли хушма тӳлев уйăрни те ĕçлеме самай хавхалантарать пулĕ?**

– Çапла, 2006 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вĕсем тĕлĕшпе хушма тӳлев уйăрнă. 2006-2007 вĕренӳ çулĕнче вĕсен йышĕ 314 вĕрентекенпе танлашрĕ. Ку тĕллевпе уйăрнă укçа-тенкĕ федераллă бюджетран вăхăтрах килсе тăрать. Муниципаллă вĕрентӳ бюджетĕнчен кăçалхи çулăн иртнĕ уйăхĕсенче укçапа тивĕçтересси пĕтĕмпе 359,7 пин тенкĕпе танлашнă.

**– Паянхи пурнăç йăлтах информатизаци ĕçĕ çинче пулса пырать, интернетпа усă курни тавракурăма анлăлатма май парать. Шкулсенче ку енĕпе еплерех ĕç-хĕл?**

– Район администрацийĕн пуçлăхĕн постановленийĕпе тата район администрацийĕн вĕрентӳ, çамрăксен политики тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕн хушăвĕпе килĕшӳллĕн пур вĕрентӳ учрежденийĕсем те анлă полосаллă канал урлă интернет сечĕпе çыхăннă. Районти шкулсенче пурĕ 314 компьютер, 16 вĕренекен пуçне 1 компьютер тивет.

Ертӳçĕсем, вĕрентекенсем, вĕренекенсем интернет сечĕпе анлăн усă кураççĕ. Вĕсем дистанциллĕ олимпиадăсене, интернет-педсоветсене, форумсене, конкурссене, вăйăсене тата ытти мероприятисене активлă хутшăнаççĕ.

2007 çулхи апрелĕн 10-мĕшĕнче Йӳçкасси шкулĕнче район шайĕнче шкулсем хушшинчи методика центрĕ уçăлчĕ. Унăн тĕллевĕ вĕрентекенсене информаципе коммуникаци технологийĕсемпе вĕрентӳ ĕçĕнче анлă усă курма вĕрентесси пулса тăрать. Кунта ятарлă курссем ирттерме палăртнă. Çак проектпа ĕçлеме 28 пин тенкĕ укçа килнĕ.

Интернет сечĕпе çыхăнма муниципаллă бюджет шутĕнчен Муркаш шкулĕ валли 7 компьютер, кĕçĕн шкулсем валли 5 компьютер тата 5 лазер принтерĕ туяннă. Çакă пĕтĕмпе 247 пин тенкĕлĕх пулнă.

Районти вĕрентӳ учрежденийĕсем валли 3 физика кабинечĕ, 4 географи кабинечĕ, 3 биологи кабинечĕ, 4 хими кабинечĕ кӳрсе килнĕ.

2007 çулта "Вĕрентӳ" наци проекчĕпе килĕшӳллĕн ачасене турттарма 3 автобус илсе килнĕ. Ăна Çатракасси, Ярапайкасси, Оринин шкулĕсем валли уйăрнă.

Сăмахăма вĕçленĕ май эпĕ пур вĕрентекене те уяв ячĕпе саламласшăн. Эсир тăрăшнипе çамрăк ăру пĕлӳ тĕнчин анлă çулĕпе пырать. Вĕсем тарăн пĕлӳ илесси вара шăпах эсир ырми-канми тăрăшнинчен питĕ нумай килет. Çăмăл мар ĕçре ӳсĕм хыççăн ӳсĕм тума сирĕн яланах ырлăх-сывлăх тата тулли кăмăл пултăр, пархатарлă ĕç сире телейпе савăнăç кăна кӳтĕр.

**Р. ИЛЛАРИОНОВА калаçнă.**

Техникăна – хĕллехи управа

## Ыранхи куна пăхса ĕçлер

Умра – Пукрав праçникĕ. Çак вăхăтра çĕр ĕçченĕ уй-хир ĕçĕсене вĕçленĕ май Пукрав ăшши тытма хатĕрленет. Ку ĕç-хĕл уй-хир ĕçĕсене явăçтарнă ял хуçалăх техникишĕн те паян айккинче пулмалла мар. Çапла калатпăр, ăна ăнланатпăр, анчах ĕçне тума тăрсан... Ял хуçалăх техникине хĕллехи управа лартассипе лару-тăру çулленех йывăр. Вăл ĕç ун çине пĕччен-иккĕн çеç пăхсан çăмăлланмĕ те. Çавăнпа та çĕршывра агропромышленность комплексне аталантарассипе ĕçлекен наци проекчĕ вăй илсе пынă вăхăтра ял хуçалăх техникипе перекетлĕ те тирпейлĕ пулмалли кашни çĕр ĕçченĕ умĕнче тăракан тĕллев пулмалла: кăçал ĕçленĕ техника çитес çул та хамăрах кирлĕ-çке. Çакна шута илсе ЧР Ял хуçалăх министерствипе çĕр ĕçĕнче ĕçлекен техникăна пăхса тăракан патшалăх инспекцийĕ сентябрĕн 27-мĕшĕнче "АПК-ри организацисен машинăпа трактор паркĕсене тĕрĕслесси, ял хуçалăх техникине управа лартассипе смотр-конкурс ирттересси çинчен" пĕрлехи хушу кăларчĕç. Унпа килĕшӳллĕн техникăна хĕллехи управа лартассине тĕрĕслесси октябрĕн 1-20-мĕшĕсенче пулать. Çак тапхăрта комисси членĕсем хуçалăхсенче техникăпа епле усă курнипе, техникăна çĕнетесси çине епле пăхнипе, машинăпа трактор паркĕсенчи культурăпа паллашĕç. Район шайĕнче çакна валли йĕркеленĕ комиссин ĕçне район хаçачĕ урлă тăтăш пĕлтерсе тăма хушнă.

Ĕçпе ырă ятлă

## Пултаруллă ветеринарсем



*Çапла хаклаççĕ эсир сăн ӳкерчĕкре куракан выльăх тухтăрĕсене Турай тăрăхĕнче пурăнакансем. Районти ветеринари службинче 16 çул вăй хуракан Алина Петровна Федорова ветврач-эпизоотолог, 7-мĕш çул çак системăра ĕçлекен Ольга Германовна Клементьева ветфельдшер, выльăх тухтăрĕнче 1989 çултанпа тимлекен тата юлашки икĕ çулне ветеринари сыватăшне ертсе пыракан Татьяна Ипполитовна Ухварина (сăн ӳкерчĕкре сулахайран сылтăмалла) – паян Турайри ветеринари сыватăшĕн ĕçченĕсем. "Лаша – пĕр пурнăç, ĕне – çур пурнăç", – тесе хаклани чăвашсем авалтанпах выльăх çине пысăк тимлĕх уйăрни пирки калать. Ку тĕрĕслĕх паян та кун йĕркинчен тухман-ха. Апла пулсан ветеринарсем ответлăха туйса пурнăçланă ĕç те ял хушшинче хисепре. Ял çыннин тав сăмахне тивĕçни вара выльăх тухтăрĕшĕн чи пысăк чыс.*

**А. БЕЛОВ сăн ӳкерчĕкĕ.**

## Условия размещения

**ПРЕДВЫБОРНЫХ АГИТАЦИОННЫХ МАТЕРИАЛОВ В МОРГАУШСКОЙ РАЙОННОЙ ГАЗЕТЕ "ÇĔНТЕРӲ ЯЛАВĔ" В ПЕРИОД ИЗБИРАТЕЛЬНОЙ КАМПАНИИ 2007 ГОДА ПО ВЫБОРАМ ДЕПУТАТОВ ГОСДУМЫ ФЕДЕРАЛЬНОГО СОБРАНИЯ РОССИЙСКОЙ ФЕДЕРАЦИИ**

Для размещения предвыборных агитационных материалов в Моргаушской районной газете "Çĕнтерӳ ялавĕ" на платной основе резервируется печатная площадь (20 процентов печатной площади издания) в период с 3 по 30 ноября 2007 года в размере 7208 кв. см.

Стоимость 1 кв. см. печатной площади, резервируемой для целей предвыборной агитации, 20 рублей.

**Редакция райгазеты.**

Юбилей

## *Саламлатпăр*



Юратнă аннене, кукамая, асаннене, Очăкасси ялĕнчи **Серафима Евдокимовна СЕМЕНОВАНА** 80 çул тултарнă ятпа чĕререн саламлатпăр, çирĕп сывлăх, канлĕ ватлăх сунатпăр. Ĕмĕрĕр вăрăм пултăр, малашне те килĕштерсе пурăнар.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, хĕрĕсемпе кĕрӳшĕсем, мăнукĕсемпе мăнукĕсен ачисем.**